26-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 28 ЫТЛАРИКУН 174(6109) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Горючие упрас тата ăна расходлас ĕç Комсомольски МТС-ра мĕнле тăни çинчен

ВКП(б) Обком бюровĕ çакна палăртнă: вăрçă условийĕсенче горючие перекетлесси государство ĕçĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çине Комсомольски МТС-ăн директорĕ Ширкатдинов тата политотдел начальникĕ Долгов юлташсем тивĕçлипе çавăрăнса пăхман. Çавна пула СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС-семпе совхозсенче горючие перекетлесси тата ăна тăккалассине пĕтересси çинчен» 1942 çулти июнĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановлени кунта журнăçа кĕрсе пымасть.

Комсомольски МТС-ăн дирекцийĕпе политотдел партипе правительствăн постановленине пурнăçа кĕртме МТС работникĕсене мобилизацилес вырăнне, çав постановление бригадирсемпе учетчиксен тата комбайнерсен канашлăвĕнче сÿтсе-явнипех лăпланса ларнă, ăна кашни тракторист, учетчик патне, горючи турттаракансем тата колхоз председателĕсем патне çитермен.

МТС-ра горючие перекетлес тата ăна тăккалассине пĕтерес тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртса хумач, кунта СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕнче кăтартса панă мероприятисене пурнăçа кĕртмеççĕ; нефтебазăна йĕркене кĕртмен, уйхирте горючи тыткаламалли оборудованисене туса çитермен. Нефтебазăна хураллесси çителĕксĕр, хуралçăсем час-часах постран пăрăнаççĕ, вĕсем пирки нимĕнле мера та йышăнмаççĕ. Горючие бригадăсене халĕ те юсавлă мар пичкесемпе турттараççĕ, трактор бригадисенче горючие усрама лупассемпе нÿхрепсем туман. Учет ĕçне йĕркелемен, ĕçленĕ автола планпа пăхнă пек 5 тонна пухас вырăнне 2 тонна кăна пухнă. Тракторсен 6-мĕш бригадинче турттарса пынă горючие виçмеççĕ. Турттаракансем горючие салатнă фактсем те пулнă. Сăмахран, «Правда» колхозра горючи турттаракан 78 килограмм, Калинин ячĕпе тăракан колхозра 70 килограмм краççин тухман. Анчах МТС-ăн администрацийĕ çавсем пирки нимĕнле мера та йышăнман. Горючи тыткаламалли инвентаре юсаман, тракторсен бакĕнчи горючие виçмелли мерка-линейкăна тĕрĕслесе йĕркелемен, клемелемен. Тракторсен хăшпĕр бригадисенче трактор бакĕнчи горючие кашни смена хыççăн виçсе ĕçе организацилемен. Ялхуçалăх машинисене МТС картишĕнчен колхозсене турттарас ĕçе халĕ те тракторсемпех туса пыраççĕ. Июлĕн пуçламăшĕнче пĕр молотилкăна турттарса кайма кăна 175 килограмм краççин расходланă. Тракторсемпе вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене техника тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр пăхса тăраççĕ.

Комсомольски МТС-ра горючие çавнашкал начар тыткаланине пула çураки пуçланнăранпа 3.000 литр ытла горючи ытлашши расходласа пĕтернĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн 1942 çулти июнĕн 20-мĕшĕнчи постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнманшăн Комсомольски МТС-ăн директорне Ширкатдинов юлташа тата МТС политотделĕн начальникне Долгов юлташа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ятласа хăварнă.

МТС директорне Ширкатдинов юлташа тата политотдел начальникне Долгов юлташа палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕнче кăтартса панă мероприятисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тума кирлине пурне те тума хушнă.

Тырă вырас ĕç пуçланас умĕн уборкăра кирлĕ горючие пĕтĕмпех турттарса хумалла. Уборка валли хатĕрленĕ горючие урăх ĕçсенче расходлама чарнă.

МТС-ра горючие расходлас ĕç мĕнле пынине ВКП(б) райкомĕ япăх тĕрĕслесе тănине палăртса, МТС-ра горючие тĕрĕс расходлас тата ăна упрас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомне тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Комсомольски МТС директорне Ширкатдинов юлташа ĕçленĕ автола 45 процентран кая мар пухса пыма хушса хăварнă.

Пирĕн самолетсем Кенигсберг çине çĕнĕрен вĕçсе кайса тапăнни

Июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Кенигсберг хулинчи (Германия) çарпа промышленность объекчĕсем çине темĕн пĕр хут бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула хулара пушарсем нумай тухнă, вĕсенчен пиллĕкĕшĕ вăйлă пушарсем пулнă, вĕсене пирĕн самолетсен экипажĕсем çав хула патĕнчен вĕçсе таврăннă чухне сăнама курнă. Хула варринче 5 хутчен тата хула хĕрринче 4 хутчен вăйлă взрывсем пулни палăрнă. Экипажсем сăнанă тăрăх, хулан хĕвеланăçпа енчи пайĕнче çар складне сирпĕнтерсе янă, çав завода вара часах çулăм хыпса илнĕ.

Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

Тинĕс-Çар Флочĕн Куннe уявлани

Июлĕн 26-мĕшĕнче — Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне палăртнă май — Мускаври мĕнпур паркăсенче ĕççынисем массăллăн уçăлса çÿрессине организациленĕ. Мускав шывĕ çинче спорт судникесен чупăвĕсем пулса иртнĕ. Пионерсен ячĕпе тăракан тĕвере столицăри шкул ачисем интереслĕ вăйă — «Тинĕс çинчен десант антарни» организациленĕ.

Клязьма патĕнчи водохранилищĕре Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне палăртнă май тинĕс-çар эстафетине туса иртернĕ. Амăртăва «Спартак», «Водник» тата ытти обществăсен командисем хутшăннă.

Горький хулинче Тинĕс-Çар Флочĕн Кунне Ока шывĕ çинче пысăк праздник туса ирттерни пăллă тунă. Хулан мĕнпур шыв станцийĕсенче ишес тата кимĕпе çÿрес тĕлĕшпе ГТО значокĕсен нормисене парассине организациленĕ. «Водник» стадионĕнче çĕршер зритель умĕнче шыв тĕлĕнче анас ĕçе кăтартса панă. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ФЗО ШКУЛĔСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ИЛЕССИ

Çамрăксене ФЗО шкулĕсене çĕнĕрен илме тытăннă. Июль уйăхĕнче мĕнпурĕ 220 пин çамрăка илеççĕ. Сентябрьте иккĕмĕш черете илме тытăнаççĕ, ун чухне чугунçул çинчи ФЗО шкулĕсене 20 пин çынна илеççĕ.

240 пин вĕренекене çак ĕçсене вĕрентсе кăлараççĕ: 116 пин çынна металлистсем пулма, 40 пин çынна ял хăн—строительсем пулма, ыттисене ытти тĕрлĕ ĕçсене вĕрентсе кăлараççĕ.

Малтанхи черетпе илесси августăн 1-мĕшĕнчен пырать, пĕррємĕш хутĕнче илнĕ вĕренекенсене шкулсенче августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа вĕрентме тытăнаççĕ. (ТАСС).

ЯЛХУÇАЛАХ ПРОДУКЧĔСЕМ ЛЕÇЕКЕН ХĔРЛЕ КАРАВАНСЕМ

Çак кунсенче Туркменин Калинински районĕнчи колхозниксем тырă памалли çулталăкри плана тултарнă хыççăн тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем 3.000 пăт ытла тиесе хĕрлĕ караван организациленĕ.

Тахта-Базарски районра аш-какай памалли плана 19 колхоз срокчен тултарнă. Продуктсем памалли çулталăкри плана тултарнă ялхуçалăх артелĕсем халь 1943 çулшăн аванс шучĕпе параççĕ.

Çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çарăн тырă фончĕ те кунсеренех ÿссе пырать. Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çарăн фондне аванс шучĕпе çĕршер пăт тырă хываççĕ. (ТАСС).

ШКУЛ АЧИСЕМПЕ УЧИТЕЛЬСЕМ КУБАНЬРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Кубаньре хĕрÿ вăхăт пуçланса кайнă. Пур районсенче те тулăх пулнă тырра массăллăн выраççĕ. Колхозсемпе совхозсене, шкул ачисемпе учительсем, пурĕ 100 пин çын, пулăшаççĕ. Отрадневски районри уйхирсенче 1.500 вĕренекен хăйсен учителĕсемпе пĕрле икĕ эрне хушшинче 10.000 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе тунă. (ТАСС).

Суйласа вырма тухрĕç

КАЛИНИНО, июлĕн 27-мĕш. (Телефонпа). Колхозсен акнă уйхирĕсене вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырра пиçсе çитет. Паян Ерашкино ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан, Кăмаш ялсоветĕнчи «Знамя труда», Калинински ялсоветĕнчи «Искра», тата Мăн Явăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозсем вырăнăн-вырăнăн суйласа ыраш вырма тухрĕç.

Ф. РОМАНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Воронеж районĕнче, çавăн пекех тата Цымлянская, Новочеркасск, Ростов районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

Пирĕн эрнере, июлĕн 19-мĕшне 25-мĕшĕсем хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй орудисенчен персе, нимĕçсен 299 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 137 самолет пĕтнĕ.

* * *

Июлĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 46 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 170 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 25 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи виçĕ составне çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступлениллĕ çапăçусем туса пыраççĕ. Противник хăйĕн çухатнă паха позицийĕсене каялла тавăрас тесе контратакăсем тăвать, анчах та вĕсем пăчланса лараççĕ. Çав çапăçусенче гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Пĕр участокра кăна, туллимар даннăйсем тăрăх, 3 эрне хушшинче противникăн пехотипе мотопехотине 4 полк ытла çапса салатнă, вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 328 танкне пĕтерсе тăкнă, противникран 400 пулемет, 560 автомат, 189 оруди, 46 миномет, 20 пин снаряд, 170 пин патрон тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен 346-мĕш пехотнăй дивизийĕ, Францирен хальçеç килсе çитсе çийĕнчех çапăçăва кĕрсе кайнăскер, чылай пысăк çухатусем тÿснĕ.

* * *

Ростов районĕнче хула хĕрринче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Наступлени тăвакан фашистсене пирĕн войскăсем пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Совет пехотин пысăках мар пĕр группи противотанковăй пăшалсемпе, гранатăсемпе тата çунакан япала тултарнă бутылкăсемпе усă курса пĕр кун хушшинче нимĕçсен 9 танкне тата çĕршер гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противник çапăçăва танксем нумай кĕртсе янă. Питĕ пысăк çухатусем тÿссе, вăл малалла куçма пултарнă.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă вăйлă çапăçусем туса пынă. Çак районра нимĕçсем Донăн кăнтăр енчи çыранне каçма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Пирĕн войскăсем нимĕçсене каялла сире-сире пăрахнă. Пирĕн артиллери активлăн çапăçать, противникăн вăйĕсем пухăнса тĕлнĕ вырăна вăйлăн пыра-пыра çапать. Пĕр кун хушшинче Н-ски чаçри артиллеристсем, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 6 танкне, войскăсем турттарса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă, шыв урлă каçмалли 9 понтонне салтаксемпе тата вооруженипе пĕрлех шыва путарнă. Тепĕр участокра нимĕçсем Донăн кăнтăр енчи çыранĕнче çирĕпленсе ларма хăтланнине пирĕн подразделени пĕтерсе хунă тата 300 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче икĕ енĕ те сайра хутран артиллерирен тата минометсенчен перкеленнĕ. Пĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсен 3 дзотне çĕмĕрсе тăкнă тата противникăн пехотине взвод çурă таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе снайперсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла вĕлернĕ.

* * *

Белоруссири районсенчен пĕринче кĕрешекен М. юлташăн партизанла отрячĕ юлашки вăхăтра темиçе кĕпере сирпĕнтерсе янă тата противникăн чугунçул çинчи икĕ эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Партизансем засада туса 60 оккупанта ытла вĕлернĕ. Икĕ уйăх хушшинче партизансен отрячĕн йышĕ икĕ хут ытла ÿснĕ.

* * *

Кăнтăрти тата Воронеж районĕнчи çапăçусенче нимĕçсен инçетри тылран васкавлăн илсе килнĕ çĕнĕ те çĕнĕ дивизийĕсем çурри палăрать. Акă, юлашки вăхăтра нимĕçсем çапăçăва Францирен илсе килнĕ 71-мĕшпе 346-мĕш пехотнăй дивизисене, Голландирен илсе килнĕ 82-мĕш пехотнăй дивизие кĕртсе янă. Гитлеровецсем хĕрсе кайсах картла вылякансем пек хăтланса, хăйсемшĕн малашне мĕн пулассi çинчен шухăшламасăр, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне хăйсен резервĕсене кĕртекĕрте яраççĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен 88-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи вилнĕ ефрейторăн Густав Кнюппăн записной кĕнекинчен илнĕ вырăнсене пичетлетпĕр:

«...Темиçе уйăх хушши ĕнтĕ эпир Голландире пурăнатпăр. Вĕрентсе ăнран янине шутламасассăн, пурнăç кунта пырать темелле. Кунти халăх пирки çакна каламалла: вĕсем пире чĕререн кураймаççĕ, анчах та чăн-чăн нимĕç тĕрлĕрен швальсем çине çавăнса пăхмасть... Адольфран çыру илтĕм. 71-мĕш дивизие питĕ васкаса Реймсран Ростов патнелле куçараççĕ. Шиклевсе тăратпăр. Неушлĕ пире те çавăнталла куçарĕç? Анчах та Хĕвеланăçĕнче там та пулин юлмалла çке-ха.

Çитменнине тата пирĕн дивизин паянхи кунччен материальнăй часть çук-ха. Пурнăç аванланасса шанатăп...

Ак хайхи килсе çитрĕ. Эпир Голландирен тухса каятпăр. Пире, ватă салтаксене, пурне те пуçтарса каяççĕ. Ниме юрăхсăрскерсемпе çамрăк ачасем çеç тăрса юлаççĕ. Неушлĕ каллех Россиялла каймалла?

...Шухăшлакалсем питĕ те япăх. Икĕ эрне ĕнтĕ урана салтман. Пирĕн ĕнерхи наступлени хамăра ситех те хакла ларчĕ. Иккĕмĕш батальонра çынсем çурри те юлмарĕç. Пире малашне мĕн пулĕ-ши?»

* * *

Нимĕç оккупанчĕсем йышăнса илнĕ Россоны хулинчен тарса тухнă граждансем каласа панă тăрăх, çав хулара нимĕçсен фашистла бандичĕсем çав тери тискер преступленисем тăваççĕ. Хулана тырса кĕрсенех гитлеровецсем хулари çынсене массăллăн çаратма тата пере-пере вĕлерме тытăннă. 40 ытла хĕрарăмпа ачасем пытаннă подвала нимĕç салтакĕсем гранатăсем нумай ывăтнă. Гитлерла ирсĕрсем 3 кун хушшинче кăна хĕрарăмсемпе ачасене тата ватă çынсене 400 çынна ытла вĕлернĕ. Нимĕç автоматчикĕсем кашни кунах хулари çынсене ушкăнĕушкăнĕпе хула тулашне турттарса тухса кайса пере-пере вĕлереççĕ.

Июлĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Воронеж районĕнче, çавăн пекех тата Цымлянская, Новочеркасск, Ростов районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра пирĕн танковăй чаçсем противникăн позицийĕсене атакăланă, ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ. Танксем çинчен антарнă десант рашçара çирĕпленсе ларнă гитлеровецсене аркатса тăкнă. Десантнăй ротăн комиссарĕ Ванкузин юлташ, тăшман персе тăнине пăхмасăрах, боецсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле тăшманăн окопĕсене чи малтан çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Хастарлă комиссар нимĕçсен 4 офицерне тата 2 салтакне персе вĕлернĕ. Гитлеровецсем, вилнисемпе аманнисене нумай çынна пăрахса хăварса, васкасах каялла чакнă. Танкăн командирĕ лейтенант Борщников тата серкант-водитель Батов противотанковăй орудие таптаса лапчăтнă, тĕл персе тивертсе пĕр дзота çĕмĕрнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен пысăк ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Попов юлташ командир пулса тăракан соединенин боецĕсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ тата, пехота хĕçпăшалĕнчен персе, противникăн 3 самолетне ÿкернĕ.

* * *

Ростов районĕнче пирĕн войскăсем хула хĕрринче йывăр çапăçусем туса пынă. Хăйсем йышлăрах пулнипе усă курса, нимĕçсем пирĕн чаçсене пĕр чарăнмасăр атакăлаççĕ. Пĕр участокра ÿсĕр гитлеровецсен батальонĕ çăра ретсемпе пырса пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем тăшмана çывăха янă та ун çине тăвăллăн пеме тытăннă. Гитлеровецсенчен сахалăшĕ кăна каялла таврăнма пултарнă. Тепĕр участокра противникăн пирĕн оборанăна шăтарса кĕрсе кайнă войскисене хирĕç юнлă çапăçу пырать. Çав участокра нимĕçсем темиçе сехет хушшинче 20 танк тата 700 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Цымлянская районĕнче шыв урлă каçмалли кĕперсемшĕн вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем пĕр вăхăтрах темиçе тĕлте Дон шывĕ урлă каçма тăрăшаççĕ. Противникăн çĕр çинчи вăйĕсене авиаци пулăшса пырать. Пĕр участокра йышлă танксен пысăк çапăçăвĕ пырать. Çав çапăçура нимĕçсен 30 танкĕ пĕтнĕ те ĕнтĕ. Пирĕн боецсем противникăн йышлăрах вăйĕсене чарса тăратнă, вĕсене малалла кайма памаççĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть йывăр çапăçусем пынă хыççăн çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Пирĕн танковăй часть пĕр паха высотана йышăнса илнĕ. Çав çапăçура пирĕн танкистсем противникăн 10-мĕш моторизованнăй полкне аркатса тăкнă тата тăшманăн 1.250 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен мотополкĕн юлашкийĕсене — 300 çынна яхăн — тыткăна илнĕ. Противникăн 20 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Чернигов облаçĕнчи партизансен Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ гитлеровецсен карательнăй экспедицине аркатса тăкнă. Партизансем 65 оккупанта вĕлернĕ тата çар хатĕрĕсем тытса илнĕ. Юлашки кунсенче çав отряд шоссе çулĕ çинчи 5 кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

19-мĕш танковăй дивизири 73-мĕш мотострелковăй полкран хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă обер-ефрейтор Ганс О. çапла каласа панă: «Хĕвелтухăç фронтне эпĕ 1942 çулти май уйăхĕнче килтĕм. Унччен эпĕ Берген хулин гарнизонĕнче, тыткăнри вырăссен лагерьне сыхлакан хуралра тăнă. Тыткăнри вырăссем тÿсекен асапсене каласа памаллах та мар. Вĕсем йĕплĕ пралук хыçĕнче усă çĕртех пурăнаççĕ. Тыткăна лекнĕ çынсем килсе çитсенех вĕсен урринчи атă-пушмакĕсене хывса илеççĕ, вĕсен япалисене пурне те илсе юлаççĕ. Тыткăнри çынсем выçă пурăнаççĕ. Апат вырăнне вĕсене вăтăтран вăхăтла ÿкнĕ лашасен какайне параççĕ. Выçăпа сунмă çынсем апат шырама тытăнсан, офицерсем вĕсене пĕр шеллемесĕр пеççĕ. Лагерьте хĕненипе, выçăпа тата чирленипе куллен 10 — 15 çын вилет. Пĕчĕк айăпа кĕрешнĕ тыткăнри çынсене карцера хупса лартаççĕ. Унтан вара никам та чĕррĕн тухаймасть. Вилнĕ тата вĕлернĕ çынсен ÿчĕсене лагерьтен çур километра часа хатĕрленĕ шăтăка пăрахаççĕ. Хăшпĕр чухне вилнисемпе пĕрле йывăр чирлисене те варса хураççĕ. Пĕрре эпĕ тыткăнри пĕр çынна икĕ сигаретка патăм. Çавăншăн мана «нимĕç рассин лайăх тумĕнне пăснăшăн» тесе çар судне парĕç. Наказани срокĕ иртсессĕн мана малти позицие ячĕç. Меллĕ май килсе туханах вара эпĕ тыткăна парăнтăм».

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăйлăрах кĕрешме тытăнаççĕ. Руан хули çывăхĕнче хĕçпăшалланнă хресченсен ушкăнĕ нимĕçсен халăхран туртса илнĕ тыррине усракан склада тытса илнĕ те унтан мĕнпур запассене турттарса кайнă. Рена станцин рельс çулĕсем çинче взрыв пулнă. Пушар тухнипе, Германи кайакан 250 вагон ытла пĕтнĕ.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене илсе, укçине те сийĕнчех парса татар!

„Динамо" колхоз членĕсем лайăх пример кăтартнă

КУСЛАВККА. Районра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать. Июлĕн 27-мĕш тĕлне рабочисемпе служащисем хушшинче 135 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 340 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Ялсенче лотерея билечĕсене сарнă вăхăтрах укçа пухас ĕçе пуçарса янă. Малтанхи икĕ кун хушшинче 270 пин тенкĕ укçа пухнă. Çак ĕçре «Динамо» колхоз членĕсем лайăх пример кăтартнă. Вĕсем лотерея билечĕсен укçине—27 пин тенкĕ — малтанхи кунах тÿлесе татнă. Колхоз председателĕ Волков юлташ хăйĕн арăмĕпе тата 14 çулхи ывăлĕпе пĕрле лотерея билечĕсене 1.200 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ лотерейăн билечĕсене вырнаçтарас ĕç Куславккари предприятисемпе учрежденисенче те активлăн иртнĕ. Пристаньри рабочисемпе служащисем, хăйсен ĕçукçи фончĕн 24 процентĕ чухлĕ çырăнса, укçине йăлтах пухса панă. Райпромкомбинатра тата çĕкăр заводĕнче ĕçлекенсем хăйсен уйăхри ĕçукçи фончĕн 14—19 процентĕ чухлĕ çырăннă.

А. М.

Çĕнĕ лотерейăн билечĕсене вырнаçтарас тата вĕсен укçине пухас ĕç республикăра мĕнле пырать

Республикăра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать. Июлĕн 27-мĕш тĕлне вĕсене колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 8.409.000 тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем хушшинче 2.078.000 тенкĕлĕх, пĕтĕмпе 10.487.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран укçине 6.000.000 тенкĕ пухнă.

Çĕнĕ лотерея билечĕсене вырнаçтарас тĕлĕшпе халĕ Елчĕк, Пăрачкав, Комсомольски, Вăрмар, Куславкка, Çĕрпÿ, Шăхасан районĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем лотерея билечĕсене бюджетпа палăртнинчен ирттерсе вырнаçтарнă. Шупашкар хулинче лотерея билечĕсене 782.000 тенкĕлĕх сарнă, çакă вăл бюджетпа палăртнипе танлаштарсан 137,7 процент пулать.

Колхозниксемпе единоличниксем хушшинче билетсем илме çырăннă вăхăтрах вĕсен укçине пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Калинински районри колхозниксем çырăннă укçине малтанхи кунсенчех тÿлесе татнă, Шăхасан районĕнче 99,8 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 98,8 процент, Чкаловски районра 97,2 процент тÿленĕ.

Анчах республикăра çак ĕçе кирлĕ пек туса пыман районсем те пур-ха. Йĕпреç районĕнче лотерея билечĕсене, бюджетпа палăртнипе танлаштарсан, 14 процент, Вăрмар районĕнче 38 процент, Улатăр районĕнче 43 процент, Етĕрне районĕнче 59 процент тата Сĕнтĕрвăрри районĕнче 63 процент çеç вырнаçтарнă. Асăннă районсенчи партипе совет тата финанс работникĕсем лотерея билечĕсене хăвăртрах вырнаçтарас тата вĕсен укçине пухса çитерес ĕç çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ.

Уйăхри ĕçукçин 17 процентĕ чухлĕ

Лотерея билечĕсене илме Шупашкарти эрех заводĕнче ĕçлекенсем ĕнер пурте пекех çырăнчĕç. Вĕсем пурĕ 5.420 тенкĕлĕх çырăнса, тăван çĕршыва юратнине кăтартрĕç. Работница Павлова юлташ уйăхри ĕçукçин 50 процентĕ чухлĕ, слесарь Вашин юлташ — 30 процент чухлĕ çырăнтĕç. Цех заведующийĕ Кравчук юлташ уйăхне 350 тенкĕ ĕçлесе илет. Вăл çĕнĕ лотерея билечĕсене 200 тенкĕлĕх çырăнчĕ.

Заводра ĕçлекенсем хушшинче лотерея билечĕсене миньтерра сарнин суммм вĕсен ĕçукçи фончĕн 17 процентĕ чухлĕ шутланать.

К. МАЛЫШЕВА.

308 пин тенкĕ пухнă

СЕНТЕР. (Телефонпа). Районра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсемшĕн укçа пухас ĕç хăвăртлăн пырать. Июлĕн 27-мĕш тĕлне районри перекет кассине лотерея билечĕсемшĕн 308 пин тенкĕ куçарнă.

Çак ĕçре уйрăмах Пашалуккасси ялсоветĕнчи колхозниксем хăйсен активлăхне кăтартрĕç. Вĕсем лотерея билечĕсене çырăнса илнĕ укçана малтанхи кунах пухса парĕç.

Мурман ялсоветĕнчи «Авангард» колхозра лотерея билечĕсене 16 пин тенкĕлĕх, «Ĕç ялавĕ» колхозра 9 пин тенкĕлĕх, Буденный ячĕпе тăракан колхозра 6.900 тенкĕлĕх тата Сталин ячĕпе тăракан колхозра 5 пин тенкĕлĕх вырнаçтарса, укçине июлĕн 26-мĕшĕнче пухса çитернĕ.

Укçа пухассине Оринино ялсоветĕнчи «Красное Сормово», «Восток», «Красная звезда» тата «Красная Чувашия» колхозсенче те вĕçленĕ. Пурĕ ку колхозсенче 37.100 тенкĕ пухса панă. Ялсовет председателĕ Николаев юлташ лайăх ĕçленине палăртмалла. Вăл колхозниксен политикăллă активлăхне çĕклесе пыма пултарчĕ.

Лотерея билечĕсен укçине пухас ĕçе Сĕнтĕр, Янăш тата Ильинка ялсовечĕсем те часах вĕçлеççĕ.

Г. ГУСЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛА ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ОККУПАНЧĔСЕН ТИСКЕРЛĔХĔСЕМ. **Укерчĕк çинче:** Район центрĕнче Молботицыра (Ленинград облаçĕ) гитлеровецсем çакса вĕлернĕ рабочисем.

(Укерчĕке вĕлернĕ нимĕç сумĕнче тупнă). ТАСС фотохроники.

Фашистсен Смоленщинăри тискер ĕçĕсем

Смоленщинăри халăх пурăнакан чылай пунктсене совет войскисем ирĕке кăларнă хыççăн фашистла оккупантсем мирлĕ совет халăхне тата аманнă красноармеецсене тискер кайăкла асаплантарса мăшкăллани çинчен калакан çĕнĕ фактсем палăрнă.

Масаловка ялĕн хĕрринче пĕчĕк ачасемпе хĕрарăмсен тата стариксен палласа илме çук лӳчĕркесе пĕтернĕ ӳчĕсем купи-купипе выртнă. Çав вырăнта пирĕн боецсем 160 виле шутласа кăларнă. Çакă вăл ялти пĕтĕм халăх пулнă.

Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсенчен ыйтса пĕлни çак тискер ĕçе тĕпĕ-йĕрĕпех кăтартса панă. Пĕр ĕçкĕ вăхăтĕнче фашистсем мĕнпур халăха укăлча патне хăваласа пухнă пулнă. Хăраса ӳкнĕ ачасене амăшĕсенчен турта-турта илсе, çавăнтах персе пăрахнă.

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. (ТАСС).

Воронеж районĕнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 26-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Воронеж районĕнчи хаяр çапăçусем пĕр самантлăха та лăпланмаççĕ. Юханшыв çыранĕсем çинче, вăрмансенче, халăх пурăнакан пунктсем патне пымалли вырăнсенче, шыв урлă каçмалли каçăсем патĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Совет войскисем противника Дон шывĕн хĕвеланăç çыранĕ çинелле хăваласçĕ.

Воронежран çурçĕр-хĕвеланăç енче пирĕн чаçсем противникран тытса илнĕ каçăна хăйсен аллинче çирĕппĕн тытаççĕ тата тăшман хывнă тепĕр каçă патнелле çине тăрсах куçса пыраççĕ. Фашистсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем атака туса пăхнă. Пирĕн боецсем, нимĕçсем хĕсее килнине сиссе пăрахса, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Воронежран кăнтăр енче вăйлă тытăçусем пулса пыраççĕ. Фашистсем пирĕн чаçсене Донăн хĕвеланăç çыранĕ çинчен хĕсее кăларма хăтланаççĕ. Анчах тăшманăн ĕçĕ ăнăçаймасть. Ĕнер гвардеец-минометчиксем тăшманăн наступлени тума шухăнса тăнă батальонĕ çине вăйлă вут-кăвар тĕкма тытăннă. Тыткăна лекнисем нимĕçсен батальонĕ пĕлĕмпе тенĕ пекех пĕтни çинчен пĕлтернĕ.

Пирĕн воинсем фашистсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç памаççĕ. Фашистсем çине кĕтмен çĕртен пыра-пыра тапăнса, тăшмана пысăк сиен кӳреççĕ. Ĕнер, каç тĕттĕмĕпе усă курса, Н-ски чаçри боецсен пысăк ушкăнĕ понтонсемпе сулăсем çине ларса тата ахаль ишсе шыв урлă тепĕр енне каçнă. Тăшман позицийĕсене атакăланă. Çав операцине вĕсем неприятелĕн вăйĕсене аякалла сирнĕ. Çав вăхăтра усă курса, пирĕн чаçăн тĕп вăйĕсем, совет артиллерийĕпе минометĕсем вăйлăн персе пулăшса тăнипе, шыв урлă тепĕр енне каçнă. Фашистсем çав каçăна асăрхаса илсе неме тытăннă вăхăт тĕлне пирĕн чылай красноармеецсем тăшмана хирĕç шыв лешьенче çапăçнă. Çапăçу çĕрĕпех пынă. Ир умĕн пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан пунктăн хĕррине çĕмĕрсе кĕнĕ. Халĕ вĕсем çав пункта пĕтĕмĕшпех хăйсен аллине илессишĕн вăйлăн çапăçаççĕ.

Пузиков красноармеец противника сăнаса тăнă. Вăл тăшманăн икĕ салтакĕ темĕнле сигналсем панине асăрхаса илнĕ. Пузиков салтаксене персе пăрахнă. Салтаксенчен пĕри тăшманăн танкĕсене çул кăтартакан сигнальщик пулнă. Пузиков унăн ракетницине тупса илнĕ те çуя сигнал панă. Противникăн машинисем пачах та урăх еннелле кайнă. Çапла вара тăшман танкĕсен атакине путлантарса лартнă.

Воронеж районĕнчи çапăçусем лăпланми хаярлăхпа малалла пулса пыраççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни—фронтра пысăк çĕнтерӳ тунипе пĕрех!

Колхоз тырă вырма тухма хĕрӳллĕн хатĕрленет

СЕНТЕРВАРРИ. Колхозлă ялсенче халĕ хĕрӳ ĕç пырать: ирхи çĕртме тăваççĕ, çум çумлаççĕ, тырăсем пухса кĕрекен машинăсене юсаççĕ, силос хываççĕ. Тырпулсене пухса кĕртес вăхăт çывăхарса килет. Уборкăра кашни сехет хаклă. Вăхăтра пухса кĕртсен çеç тулăх тырпула алла илетĕн, сая ярсан вара вăл çухалать. Тырпулсене пĕтĕмĕн, пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тесен, халех пурне те шутласа хумалла. Колхозăн ĕç вăйне мирлĕ пек вырăнаçтарса тухмалла, машинăсемпе транспорт инвентарĕсене ĕçе хатĕрлемелле, уйри ĕçсем вăхăтĕнче колхозниксем валли пĕрлешӳллĕ столовăйсем уçма хатĕрленмелле т. ыт. те.

Камай ялсоветĕнчи «Кустерь» колхоз ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пысăк тимлĕхпе туса пырать. Колхоз ирхи çĕртме сухине туса пĕтерчĕ, çурхи тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатнă, 20 гектар çинчи тулла вичĕ хутчен çум курăкĕсенчен тасатса тухнă.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç вĕçленсе пырать. 70 çурла шăлласа хунă, кĕрепеллĕ çавасем 18 тунă. Витнĕ итемсене юсанă, тасатса хунă. Халĕ колхозниксем пысăк çĕкленӳпе утă çулаççĕ. Пурĕ 56 гектар çинчи утта пухса кĕртмелле, паянхи куна ăна пĕтĕмпе пекех çулнă, пуçтарма тытăннă.

Нумай колхозниксемпе колхозницăсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çĕртме тунă çĕрте Николай Демидов колхозник ĕç нормине куллен 120—130 процент тултарса ĕçлерĕ, Е. Семенова, К. Демидова, Ф. Ефремова, М. Павлова тата ытти чылай колхозницăсем çум çумлас ĕçре нормăна тăтăшах 200 процент тултарса ĕçлерĕç. М. Павлова, А. Авиновицкая, К. Демидова колхозницăсем утă çулнă çĕрте те икшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Колхоз силос хывмалли плана иртерсе тултарчĕ. Паянхи куна 75 тонна силос хывнă тата 15 тонна хывма пăтăк чавнă. Çак иртнĕ кунсенче колхоз выльăх-чĕрлĕх витисене юсама тытăнчĕ.

С. ПЕТРОВ.

„Çĕнĕ Юнга" колхоз уборка умĕн

СЕНТЕР, июлĕн 25-мĕш. «Çĕнĕ Юнга» колхоз уйхирĕнче кăçал нихăçанхинчен те пуянрах тырпул ӳссе пырать. Тулăх тырпула колхозниксем çирĕп сыхлаççĕ. Юланутлă хуралçăсем тырă участокĕсене каçсерен пăхса çаврăнаççĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес вăхăт çывхарса килет. Ăна иртерме колхозниксем тахçантанпах хатĕрленеççĕ. Васкамасăр, тĕплĕн ремонтланă вĕсем жнейкăсене. Çурласемпе çавасене туптанă, шăлланă, молотилкăсене ĕçе вырнаçтарса лартнă, витнĕ итемсене тасатса юсанă, тырă йышăнма михĕсем хатĕрленĕ.

Колхозăн правленийĕ уборкăри ĕçсен планне уйăх маларах туса хунă. Плана тĕплĕн шухăшласа тунă, унта кашни ĕçе шута илсе ăна мĕнле пурнăçа кĕртессине паллă тунă. Пурĕ 452 гектар çинчен тырă пухса кĕртмелле пулать. Çак вăхăтрах авăн та çапмалла, государствăна тĕштырă леçсе памалла, кĕраки туса иртермелле, çĕртме туса хăвармалла. Пĕр ĕçне те кая хăвармалла мар. Ĕç вăйне лайăх вырнаçтарма пĕлсе, ку ĕçсене пурне те вăхăтра туса пымалла.

Колхозăн уборка вăхăтĕнчи ĕç планĕ çак вăхăтра ĕç вăйне мĕнле вырнаçтарса тухнине кăтартса парать. Ĕçе колхозниксен мĕнпур массине мобилизацилеме палăртнă. Ку шута выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем те кĕреççĕ. Уборкăн малтанхи кунĕсенче вĕсем пурте тырă вырнă, кĕлте çыхнă çĕрте тата авăн çапнă çĕрте ĕçлемелле. Каярахпа колхозниксен пĕр пайĕ государствăна валли тырă турттарас, кĕраки тăвас тата çĕртме туса хăварас ĕçсене куçать.

Çапла, план тăрăх колхоз кĕрхи тырăсене 5 ĕçкунĕ хушшинче, çурхи тырăсене 8 ĕçкунĕ, çĕрулмине 5 ĕçкунĕ хушшинче пухса кĕртмелле. Тырăсене вырса турттарнă хыççăнах çапма тытăнса, пурĕ 45 ĕçкунĕ хушшинче пĕтĕм тырпула çапса кĕртме йышăннă.

Вăрçă вăхăтĕнчи пуян тырпула пухса кĕртес ĕçре кашни колхозница ĕçлетĕр тесе, уборка вăхăтĕнче колхоз пĕрлешӳллĕ столовăй организацилет. Ача-пăчасен яслипе площадкисем ĕçе тытăннă та ĕнтĕ. Уборка вăхăтĕнче кашни сехете перекетлесе ĕçлес шутпа, колхоз государство умĕнчи обязательствăсене халĕ парса татма тăрăшать. Кăçалхи обязательство шучĕпе государствăна паянхи куна колхоз 68 центнер ыраш, 13 центнер çĕрулми панă. Сĕт, çу тата аш-какай обязательствисене пĕтĕмĕшпех пурнăçланă, çăмарта обязательствине 77 процент тултарнă.

Колхоз производствинче коммунистсемпе комсомолецсем хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Вĕсен ĕçри примерĕпе агитациллĕ ĕçĕ колхозниксен массине çĕнĕ ӳсĕмсем тума, çĕнĕ вăйхăватпа ĕçлеме хавхалантарса пырать. Агитаторсемпе вулавçăсем уйăрнă, бригадăсенче стена хаçачĕсене тăтăшах кăларса тăма палăртнă, уборка вăхăтĕнче колхозра малта пыракансен хисеп хăмине организацилеççĕ.

Силос хывас ĕçе йĕркеллĕ туса пырар

ÇĔМĔРЛЕ. («**Чăваш Коммуни» корр.**). Районри чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем юлашки вăхăтра уйрăмăнах силос хывас енĕпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Уйрăм колхозсем районран панă планра кăтартнинчен ытларах силос хывса кăларма тăрăшаççĕ. Паянхи куна районĕпе 3.800 тонна ытла силос хывнă.

Чăваш Улхашри «Искра» колхоз ку таранччен 250 тонна силос хывнă (план тăрăх 150 тонна хывмалла). Ку ĕçе комсомолецсемпе вĕренекенсем активлăн хутшăннă. Вĕсем ял таврашĕнчи силос тума юрăхлă курăксене пĕтĕмпе тенĕ пекех çулса пухрĕç.

—Пирĕн колхозниксем выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне хăпартас ĕçре силос епле пысăк вырăн йышăнса тăнине аван пĕлеççĕ. Çавăнпа вĕсем ăна ытларах тума тăрăшаççĕ, — тет колхоз председателĕ коммунист Шивкин юлташ.

«Искра» колхоз членĕсем çитес кунсенче тата тепĕр шăтăк силос хывса хăварма хатĕрленеççĕ, ку тĕлĕшпе халь темиçе колхозник куллен тăрăшса ĕçлеççĕ.

Турханта «Комбинат» колхоз членĕсем те обществăллă выльăхсем валли апат хатĕрлес ĕçе кăçал пысăк хастарлăхпа туса пыраççĕ. Паянхи куна ку колхоз (председателĕ Кузьмин юлташ) 300 тонна хывас вырăнне 350 тонна хывса, плана 116 процент ытла тултарчĕ. Силос хывасси кунта малалла пырать.

Пояндайкинчĕри «Новая жизнь», Садеркинчĕри «Авангард» Улхашри «Подборное», «1-ое мая» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те силос хывас ĕçе йĕркеллĕ туса пыраççĕ, вĕсем хăйсене панă заданисене ытлашшипех тултарчĕç.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче ку ĕçе тивĕçлĕн туса пыни курăнмасть, Кăмаша ялсоветĕнчи «Красный пахарь», «1-ое мая» тата «Волга» колхозсен план тăрăх пĕтĕмпе 200 тонна силос хывмалла, паянхи куна пĕр тонна та хывман. Çапах ялсовет председателĕ Умов юлташ ку ыйтупа сахал интересленет, вăхăта калаçса çеç ирттерет. Колхоз председателĕсем: «вăхăт çук, кĕркуннеччен ĕлкĕрĕпĕр-ха», тесе лараççĕ.

Мыслец ялсоветне кĕрекен Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхозра та çавăн пекех. Колхозăн ял таврашĕнче силослăх питех те паха курăксем пур, анчах вĕсене çулмаççĕ, силос хывма шăтăксем те чавман.

Райçĕрĕç пайĕн работникĕсем часчасах колхозсенче пулаççĕ. Вĕсен ĕнтĕ, ытти ĕçсемпе пĕрлех, силос хывас ĕçпе те интересленмелле. Фактсем çакна кăтартса параççĕ: райçĕрĕç пайĕн работникĕсем колхозсенчен силос хывни çинчен сведени илнипех лăпланса тухса каяççĕ.

Х. ЛИСИН.

Ĕнесен продуктивноçĕ ӳсрĕ

КАНАШ. (**Хăмăр корр.**). Калиновкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозăн сĕт-çу фермине 45 ĕне, вĕсенчен сăвакан ĕнесем 16. Колхозăн кăçал фермăри кашни фуражлă ĕнерен план тăрăх 1.375 литр сĕт суса илмелле. Çак задание ферма паянхи куна çуррине ытла пурнăçланă, кашни фуражлă ĕнерен 790—800 литр сĕт суса илнĕ. Фермăри хăшпĕр ĕнесем кунне 9—10 литртан кая мар сĕт параççĕ. «Нила» ĕне малтанах кунне 4-шар литр çеç панă, халĕ вăл 7-шер литр сĕт парать. «Маруська» ĕне кунне 10 литр, «Бурий» — 10, «Нюська», «Зорька» ĕнесем 9-шар литр сĕт параççĕ. Фермăра халĕ сĕт 5—6 литртан кая паракан ĕнесем çук.

Ферма 1942 çулшăн государствăна сĕт-çу парас обязательствăна тултарса, 1943 çулшăн та 500 литр сĕт панă. Çавăн пекех колхоз государствăна брынза, çăм, çăмарта парăмĕсене парса татнă, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 6,8 килограмм çăм, 150 çăмарта панă.

Фермăри выльăхсене лайăх пăхас, фермăри витесене хĕллене хатĕрлес, выльăхсем валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе колхозниксем çине тăрса ĕçлеççĕ. Выльăхсем валли халь 25 лав çулçă, 25 гектар çинчен клевер утти çулса хатĕрлесе хунă, çак кунсенчех 20 тонна силос хываççĕ.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенче

США государственнăй секретарĕ Хэлл каланă сăмах

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Паян Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ радио тăрăх сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакăн çинче чарăнса тăнă:

«Халь пыракан вăрçă пĕр çĕршыв тепĕр çĕршыва хирĕç вăрçакан вăрçă кăна мар пулса тăрать. Чи ирсĕр те тискер лидерсем ертсе пыракан тăшман пирĕн çĕршыва, çавăн пекех тата ытти кашни çĕршыва çĕнтерсе илсе чуралăха кĕртсе ӳкерессшĕн. Пĕрлешнĕ çĕршывсем тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн, хăйсен ирĕклĕхĕсемшĕн, хăйсен кил-çурчĕсемпе хăйсен пурнăçĕшĕн кĕрешеççĕ. Сĕмсĕр те хĕрхенӳсĕр завоевательсене, тискер пусмăрçăсене мĕнпур тĕнчере пĕтерсе тăкас ĕмĕтпе пĕрлешнĕ эпир. Çав тискер вăйсене пĕтерсе тăксан, ирĕклĕх е мĕнпур çĕршывсемпе халăхсене пĕртан ирĕклĕх кӳрекен майсем ура çине тăрĕç».

«Европăпа Азире пĕр çĕршыв хыççăн теприн çине агрессорсем ултавлăн пыра-пыра тапăнчĕç пулсан, тĕнчере хăрушлăх умĕнче тăман пĕр çĕршыв та çуккипе паллă пулса тăчĕ. Мире сыхласа хăварас кăмăлпа е провокацисенчен пăрăнса юлас майсемпе, нейтралитет политикине тытса пынипе е тапăнакан центрсенчен аякра тăнипе хăрушсăрлăх туса хума çук. Тăшман пырса тапăннинчен сыхланса юлас тесен, ытларах вăй хума кирлине, тăшмана хирĕç çирĕп тăма кирлине, пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç тăрса ăна аркатса пыракан мĕнпур ирĕклĕ çĕршывсен вăйĕсене пĕрле пухма кирлине пĕр çĕршыв хыççăн тепĕр çĕршыв питех те кая юлса чухласа илчĕç; тĕнчери мĕнпур çĕршывсемпе халăхсене пăхăнтарас шутпа пуçланнă движени умĕнче харпăрхăйне кăна хӳтĕлесе хăварас законпа усă курса ларни, нейтралитет çинчен пĕлтернипе кăна лăплланса ларни закон тулашĕнче тăракан пĕр-пĕр банда пырса тапăннă мирлĕ общинăн гражданинĕ хăй нейтралитет тытни çинчен пĕлтерни пекех айванла та вилĕмле ĕç пулса тăрать».

«Сынсемпе çĕршывсем хăйсем чăн-чăн ирĕклăхре тăма тивĕçлине кăтартса парас тесен, çав ирĕклĕхе сыхласа хăварассишĕн, ирĕклĕхе пĕтерсе тăкма хапсăнакансене хирĕç пур майсемпе те кĕрешмелле. Ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ çĕрте çакăнтан шанчăклăрах меслет урăх çук. Хĕвелтухăçĕнчи тата Хĕвеланăçĕнчи çĕнĕ тирансен планĕсем никăма та нимĕнле ирĕклĕх те, нимĕнле шанчăк та сунмаççĕ. Кам та кам Гитлерпа Япони военщининчен ирĕклĕх е ирĕклĕх илмелли майсем хальхинчен ытларах кĕтет пулсан, антив çавăн пек çынсем Польшăри, Чехословакири, Норвегири, Францири, Югославири карательнăй отрядсем çине, Германипе Австрири концентрациллĕ лагерьсем çине çаврăнса пăхчăр. Антив вĕсем мĕнпур оккупациленĕ çĕршывсенчен каторгăри ĕçе хăваласа пухнă ĕççынисем тӳсекен мăшкăлпа паллашчăр».

«Событисем çакна уççăнах кăтартса парчĕç: тĕнĕл держависем хăйсен аллине вĕçĕ-хĕррисĕр çĕршывсем çĕнтерсе илме хапсăнаççĕ. Вĕсен юлашки тĕллевĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата мĕнпур Хĕвеланăç полушарийĕ пулса тăни часах пурниншĕн те паллă пулчĕ. Çакна ăна разбойниксем хăйсемех, 1940 çулти сентябрĕн 27-мĕшĕнче хăйсен виçĕ енлĕ пактне пичетлесе кăларса, ĕненмеллех кăтартса пачĕç».

«Пирĕн противниксем пире хирĕç хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕр чăмăрĕн кашни пайĕнчех кăларса тăратрĕç. Эпир хамăрăн чикĕсен картишĕнчех юлса, вĕсен атакисене сире-сире янипех çырлахса ларса, çак вăрçăра çĕнтерме пултараймастпăр. Тăшман пырса тапăннă çĕршывсем çавнашкал тапăнакан вăй ăçтан тухнине пырса тупса пĕтерсе пырсан кăна тăшман сывлăшран, шыв айĕнчен тата ытти майсемпе килсе тапăннине ăнăçлăн сире-сире яма пулать. Эпир хамăрăн паттăр союзниксене мĕнпе май килнĕ, çавăнпа пуринпе те пулăшăпăр. Хамăрăн противниксене çĕр чăмăрĕн кирек мĕнле кĕтесĕнче те — тĕнĕл держависен вăйĕсене ăçта ăнăçлăрах та хăвăртрах тата шанчăклăрах пĕтерсе тăкма май пур, çавăнта йĕрлесе тупса пыра-пыра тапăнăпăр. Пирĕн умра мĕн тери пысăк задача тăни çинчен эпир пĕлетпĕр. Çав задачăна пурнăçа кĕртесси вĕçĕ-хĕррисĕр вăй хурса кĕрешме ыйтнине, иксĕлми паттăрлăхпа тăрса кĕрешме ыйтнине эпир пĕлетпĕр. Çав çулйĕр темĕн пек вăрăм пулсан та татăклă çĕнтерӳ патне эпир пĕтĕм вăйсене хурса малаллах куçса пырăпăр. Пирĕн ĕçсем вăхăтлăха ăнăçсăр пулнă пирки пирĕн вăйсем хавшамалла мар, пирĕн çухалса каймалла мар. Пачах та урăхла, çакă вăл кĕрешӳри чăн-чăн паттăрсемпе патриотсемшĕн тăшмана ӳсе пыракан вăйпа хирĕç пырса çапма чĕнекен, нимĕнле вăй умĕнче те, нимĕнле хăрушлăх умĕнче те каялла чакман çирĕплĕхпе пырса çапма чĕнекен сигнал пулса тămалла.

Хамăра хӳтĕлессишĕн тата сыхласа хăварассишĕн çапăçса, пирĕн Гитлерпа Японин военщинин тĕнчери агрессиллĕ вăйĕсене аркатса пĕтерсе тăкмалла. Çакна тăвас тесен, пирĕн халăхăн тата ыттисемпе пĕрлешнĕ 28 çĕршыври кашни халăхăн кĕрешӳ ĕçне хăйĕн вăхăтне, хăйĕн пурлăхĕпе пурнăçне халиччен историре пулман виçепе памалла. Пĕтĕм тĕнчери ирсĕрсем, бандитсем пек, законсăрлăхран хăйсен ирĕкĕпе парăнас çук. Вĕсене вăйпа усă курса кăна чарма пулать.

Çĕнтерӳ тунă хыççăн пирĕн чи малтан этем тӳсме пултарнинчен нумайрах асап тӳснĕ халăхсем çине çаврăнса пăхмалла».

Малалла Хэлл вăрçăран мирлĕ пурнăçа куçнă чухнехи условисенче тухса тăракан ыйтусем çинче, вăрçă пула арканса, пушанса юлнă пурнăçа юсамашкăн, мирлĕ производствăна ура çине тăратмашкăн уйрăм нацисене, çавăн пекех тата нацисен ушкăнĕсене пĕрлештерме кирли çинче чарăнса тăнă.

«Малашне нацисем хушшинчи мире, вăйпа хӳтĕлесе тăма пултаракан пĕтĕм тĕнчери организаци тума кирли уççăнах куç умне тухса тăрать, — тенĕ Хэлл. — Мире тытса тăма пултаракан механизм туса хурас тĕлĕшпе тĕнчери çĕршывсен пĕрле тăрса ĕçлемелле пулать».

«Хальхи вăхăтра, — тенĕ юлашкинчен Хэлл, — чи кирлĕ проблемăсенчен пĕри вăл — вăрçăра май килнĕ таран хăвăртрах тата татăклă çĕнтерӳ тăвасси пулса тăрать. Çакна тумашкăн пирĕн çĕнтерĕве алла иличчен кунран кун пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Çынсен ирĕклĕхĕ çине хĕçпăшалпа хаяррăн пырса тапăнни этемлĕхе паттăрлăхпа çирĕплĕхĕн, моралъ вăй-хăвачĕн çĕнĕ, чи çӳлĕ пусăмне çĕклерĕ. Çакă вăл пĕрле тăрса кĕрешес, çухатусене пĕрле тӳссе ирттерес, вăй-хăватсене таччăнрах пĕрлештерес ĕçĕн çĕнĕ туртăмне çуратрĕ. Çакăн пек пысăк вăй-хăват пур чухне эпир çĕнтеретпĕрех».

АНГЛИПЕ АМЕРИКĂРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОМИТЕТНЕ ТУНИ

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вальтер Ситрин çапла каланă: Америкăри ĕç федерацийĕ Англипе Америкăри профсоюзсен комитетне тума сĕннине тредюнионсен конгресĕн генсоветĕ ырларĕ. Çав сĕнĕве йышăнса, вăл çакна шанса тăрать: халь тăвакан комитет Атлантика океанĕн икĕ хĕрринче пурăнакан рабочисене пĕр-пĕринпе çыхăнма килĕштерсе ĕçлеме тата вăрçа ăнăçлăн вĕçлеме пулăшĕ, тенĕ.

АМАННА НИМĔÇСЕМ ВĔÇЕХЕРРИСĔРЕХ ТĔЛ ПУЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Стамбулран пĕлтернĕ тăрăх, Берлинран килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: юлашки вăхăтра Берлинăн урамĕсенче тĕл пулакан аманнă салтаксен шучĕ ытла та хытă ӳссе кайнă. Гостиницăсем бомбăсем пăрахнă хуласенчен—Кельнран, Эссенран, Любекран тата ыттисенчен те тарса пынă çынсемпе тулса ларнă.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, влаçсем Венгрипе Словакире нимĕçсен аманнă салтакĕсене вырнаçтарма мĕнпур гостиницăсене туртса илнĕ.

БЕРЛИНРА ВАЙЛĂ ПУШАРСЕМ ТУХНĂ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан хаçатсен Берлинри корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 20-мĕшĕнче ирхине Берлинăн Вильмерсдорф районĕнче 7 тĕлте вăйлă пушарсем тухнă, вĕсем пысăк сиен кӳнĕ. Полици йĕрлесе пĕлнĕ тăрăх, çав пушарсем вут тĕртнипе тухнă. Айăплисене тупайман.

ЮГОСЛАВИРИ ПАРТИЗАНСЕН ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Югославири партизансен çарĕн штабĕ çапла пĕлтерет: партизансен отрячĕсем, Кочевье хулинчен кăнтăралла наступлени туса пырса, Купа шывĕ хĕрринче ларакан Борд-Моравица хулине тытса илнĕ те Хорвалире кĕрешекен партизансен отрячĕпе пĕрлешнĕ. Партизансем Кочевьепе Любляна хушшинчи чугунçула пĕтĕмĕшпех контрольлесе тăраççĕ.

Итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсем, халăха тискеррĕн асаплантарнипе хăратас тесе, Словакире темиçе пин çынна ялан нимĕн юмиччен çунтарса янă. Анчах та Югослави патриочĕсем, гитлеровецсен çав тискер ĕçĕсене хирĕç ответлесе, тата хытăрах кĕрешме тытăннă. Çунтарса янă ялсенчи çитĕннĕ çынсем пурте партизансен çарне кайнă.

Англи авиацийĕ Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Рур çине вĕçсе пырса тапăннă. Пуринчен ытла Дуисбурга атакăланă.

Çавăн пекех тата Голландири аэродромсем çине, оккупациленĕ территоринчи чугунçулсемпе ытти объектсем çине тата противникăн Франци çыранĕ патĕнчи суднисем çине бомбăсем пăрахнă.

Çак мĕнпур операцисенчен хăйсен базисене 15 самолет таврăнман.

Пĕччен ларса пымалли самолетăн, июлĕн 26-мĕшĕнче ирхине Рур çине бомбăсем пăрахнăскерĕн, пилочĕ çапла каласа панă: «Дуисбургăн докĕсемпе промышленность районĕнче пушарсем çаплах сӳнмен-ха», тенĕ.

Рейтер агентстви каланă тăрăх, противникăн авиацийĕ Англин çурçĕр-хĕвелтухăç çыранĕ çине кăçкăра вăхăта вĕçсе пырса тапăннă. Пĕр пунктра темиçе тĕлте пушар тухнă, вилнисем те пур.

Нимĕçсен ĕнер 3 самолет, июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле 2 самолет пĕтнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ДУИСБУРГ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле (çак эрнере ĕнтĕ виççĕмĕш хут) Дуисбург çине вĕçсе пырса тапăннă чухне хула çине шултăра йышши бомбăсем 25.000 килограмм ытла пăрахнă тата çунтаракан бомбăсемпе фугаслă пĕчĕкрех бомбăсем нумай пăрахнă. Вăл тапăнăва йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем хутшăннă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 25-мĕшĕнче фронтăн пур участокĕсенче те лăпкă тăнă.

Авиаци тăшманăн транспортне, Тобрука, Крита тата фронт çывăхĕнчи района ăнăçлăн атакăланă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, импери çарĕ çак кунсенче наступлени тума тытăнсан, нимĕçсем Итали чаçĕсене хыçаларах ярса, фронтăн малти линине пĕтĕмĕшпех хăйсем йышăннă.

Роммель халь танксен пысăк çапăçăвĕ пуласран сыхланма тăрăшать. Анчах та унăн çитес эрнере тепĕр хут хаяр çапăçăва кĕрсе каймаллах пулать пуль.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ФЗУ Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрики

объявляет набор подростков не моложе 16 лет с образованием не ниже 4-х классов в группы:

1) ткачей,
2) съемщиц на ватерах.

Срок обучения 3½ месяца.

Учащиеся обеспечиваются стипендией, хлебными карточками и питанием в столовой фабрики.

За справками обращаться в канцелярию школы: ул. Володарского, дом № 5 (Дом печати), 2-й подъезд, 2-й этаж, ежедневно кроме общевыходных дней.

Зав. ОПК.

3—1.

Чувашскому Обкому МОПР требуется бухгалтер. Обращаться: г. Чебоксары, улица Ленинградская, д. № 20, телефон № 0.60.

Чувашской конторе Главзаготскот Центра

требуются на постоянную работу: секретарь-делопроизводитель, начальник оперативного учета, секретарь машинистка.

За справками обращаться по адресу: Канашская ул., д. № 21. Тел. № 6-72, № 2-34.

Чувашская контора.

1—1.

Чебоксарской Техно-ткацкой фабрике требуются:

электромонтер, столяры, батанщики, плотники, охранники, возчики.

Принимаются женщины и подростки на обучение ткачихами, плетельщицами.

Обращаться: ул. Чувашская, помещение Черепичного завода. Тел. 7-46.

2—1.

ПРОПАЛИ 2 ЛОШАДИ

Первая — рыжая, 20 лет, правое плечо и под седелькой стерто; вторая — гнедая, 20 лет, на обоих плечах стерто.

Знающих о местопребывании их просим сообщить по адресу: Ишлейский район, д. Сесьмеры, правлению колхоза.

ПРОПАЛА КОРОВА

с следующими приметами: высокого роста, черной шерсти, голова белая, правый рог выбит, под брюхом около вымени белое пятно, десяти телят.

Знающих просим сообщить по адресу: Чебоксарский район, Чувашской АССР, правлению Больше-Карачуринского колхоза «Коминтерн».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 203.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.